Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова

Мăр-мăр тупса пачĕ мăшăр

Интернетри сăнӳкерчĕк

КАЛАВ 16+

Кĕçĕн тусăмăрсем пурнăç тăршшĕпех пирĕнпе юна шар. Вĕсем этемĕн чи ырă енĕсене кăтартма пулăшаççĕ. Пĕр пурнăç ӳкерчĕкĕ куç умне тухса тăчĕ.

Эпĕ ун чухне кацча кайманччĕ-ха. Пĕрре мана ĕçрен командировкăна ячĕç. Утса пыратăп ял пĕви хĕррипе. Сасартăк кушак мяуклатни илтĕнсе кайрĕ. Чарăнса тăтăм. Чĕрчунĕ хайхискер питĕ илемлĕскер. Шап-шурă тĕслĕ. Мулкач тейĕн. Ман çине чăр-чăр пăхать. Пĕр вăхăт киленсе тăнă хыççăн малалла утса кайрăм. Кушак хальхинче тата хытăрах мяуклатма пуçларĕ. Сумкăран кукăль сăмси кăларса хуçса патăм. Çук, апата тĕкĕнсе те пăхмарĕ. «Ну, апла чипер юл»,– тетĕп чĕрчуна. Вăл ман çула пӳлсе хучĕ. Кушака пĕр кукăлех пама шутларăм. Унччен те пулмарĕ – çывăхри çуртри хапха алăкĕ уçăлса кайрĕ. Çамрăк арçын тухрĕ. Вăл пĕрре ман çине, тепре кушак еннелле пăхса кулкаласа илет.

– Пирĕн кушак вăл. Ман валли мăшăр шырама тухнă. Çырни алкумнех çитнĕ те, манăн пĕчĕк тусăм ăна ярасшăн пулмарĕ,– терĕ те арçын кушака алла илчĕ. – Мăр-мăрăм мана авлантарасшăн.

Нар пек хĕрелсе кайрăм.

– Кацча кайнă, ман икĕ ача,– суçтеретĕп эпĕ. Вăл ман пата çывăхарах пычĕ те:

– Çук, çук эсир кацча кайман. Çинçе пӳрнĕр çинче çĕрĕ те çук, –терĕ вăл.

– Каçарăр та, ман сирĕнпе каласма вăхăт çук. Центра çитмелле,– хирĕçлерĕм эпĕ.

Арçын самантрах çăмăл машинине тапратрĕ, мана ларма сĕнчĕ. Эпĕ, паллах, чи малтанах килĕшмерĕм. Тата сенкер экран çинчен этемлĕхĕн черченкĕ çуррийĕ ултав серепине лекнĕ тĕслĕхсене тăтăшах кăтартаççĕ те – шиклентĕм. Кӳршĕ хĕрарăмĕ, ахăртнех пире сăнаса тăраканскер, пĕтĕм ял илтмеллех янраттарччĕ:

– Ан хăра, хĕр-упраç, Микулай вăл пи-и-тĕ лайăх, ĕçчен çын. Вăл хурт-кăпшанкăна та тĕп тăваймасть пулĕ. Тулĕк пĕр çитменлĕх пур – хусах.

Кӳршĕ хĕрарăмĕн ăшпиллĕ сăмахĕсем мана хăюлăх кĕртрĕç. Хамăн ăшра апла вăл начар çынах мар терĕм те машина ăшне кĕрсе лартăм. Пĕр вăхăт чĕнмесĕр пытăмăр. Центра çитиччен 4–5 çухрăм юлсан Микулай хăех сăмах пуçарчĕ:

– Апла сире ман кушак килĕшрĕ. Пĕлетĕр-и, вăл мĕн ятлă?

Эпĕ шутласа тăмасăрах: «Шур мулкача асилтерет те ... Мулкач ятлă пулĕ», – хушса хутăм.

Микулай хурава илтсен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ. Кушакĕ чăнах та Мулкач ятлă иккен. Ăна вăл салтакран таврăннă чухне пĕрле илсе килнĕ пулнă. Куян пек шурă тĕслĕрен Мулкач ят панă.

Микулай поселокра мана чечек илсе парнелерĕ те: «Сана пĕрре курсах пĕтĕм чун-чĕререн килĕштертĕм. Шутлатăп та, пирĕн иксĕмĕрĕн пĕр çулпах утмалла, çемье çавăрмалла. Нумай шутласа тăрар мар, кĕр мăнтăрĕпе туй кĕрлеттерер. Çак сăмахсене эпĕ паянччен никама та каламан»,– терĕ.

Кун пек лару-тăрăва лексе курманччĕ-ха. Паллашнă-паллашман никам та кацча тухма ыйтман. Сăнатăп Микулая: вăл тĕреклĕ хулçурăмлă, алли ĕçпе кушăрханă, кăмăлĕ ырă, чĕрчунсене юратать... Япăх мăшăрах паллашрăмăр.

Кĕр мăнтăрĕпе туй кĕрлеттертĕмĕр. Мăшăрăн ялĕнче пурăнма пуçларăмăр. Хайхи кушак пĕрремĕш кунтанах ман çума йăпшăнчĕ. Пытармастăп, малтанах кушаксене юратса каймастăмччĕ. Анчах та Мулкач ятлă мăр-мăра килĕштертĕм. Ман хыççăнах çӳретчĕ. Темшĕн-çке, çие юлсан питĕ шăширен хăраттăмччĕ. Акă, пĕрре кĕлетре ăна куртăм та каллех шарт сикрĕм. Пирĕн Мулкач шăшие пĕрре сиксех тытрĕ. «Маттур, пĕчĕк тусăмçăм», – терĕм те кушака хăйма çитертĕм. Коля мăшăрăм Мулкача тимлĕх уйăрнине курсан питĕ савăнатчĕ.

Хальхи вăхăтра пепке çут тĕнчене киличченех УЗИ тĕпчевĕсем тăваççĕ, ытларах чухне ывăл е хĕр кĕтме хатĕрленмеллине тӳрех калама пултараççĕ. Анчах та УЗИсенче пулаттăм та, тухтăр мана татăклăн хуравлаймастчĕ. Вăхăт çитсен пĕлĕн тетчĕ. Хырăм çавракине кура тăванăмсем, пĕлĕшсем пĕри те тепри хĕр çуралĕ тесе калани халĕ те хăлхара янăрать. Кушак вара калаçăва илтсен çине-çине «мяу-мяу» тетчĕ. Хăш-пĕр чухне «ноу -ноу» (акăлчанла «çук, çук») тенĕ пек янăратчĕ.

Пĕр каçхине тĕлĕк тĕллентĕм. Эпĕ кушак хыççăн утатăп. Такăр çул уçланкăна илсе çитерчĕ. Мăр-мăр малалла чупса кайрĕ. Пăхатăп та – инçе те мар, кавир çинче кăвак тумлă ача лара парать! Эпĕ «ывăлăм!» тесе кăшкăртăм та пепкене пырса алла илтĕм. Кушакĕ савăнăçлăн мяуклатрĕ вара ... Чăнах та, мăшăрăмпа иксĕмĕрĕн ывăл ача çуралчĕ.

Тĕлĕнмелле те, тĕпренчĕкĕм çут тĕнчене килнĕ кун кушак та çăвăрланă. Ывăлăм ларма-утма пуçпасан çурасем унпа вылятчĕç. Эпир Мулкачпа çамрăк ăру çине кăмăллăн пăхса лараттăмăр. Этем – çутçанталăкăн пайĕ теççĕ те, тĕрĕсех çав.

Шел те, халĕ Мăр-мăр çут тĕнчере çук ĕнтĕ. Сиплерĕмĕр пулин те аманнă хыççăн ураланаймарĕ. Турă сывлăх парсан, çак ăслă кушак çинчен мăнукăмсене кăна мар, кĕçĕн мăнуксене те каласа кăтартассăм килет.

Елена ГРИГОРЬЕВА

Кĕтмен парне

Ольга ВАСИЛЬЕВА

КАЛАВ 16+

Интернетри сăнӳкерчĕк

«Паян та кая юлса килчĕç. Мана сахалтарах курас тесе киле те килсе курăнмаççĕ-çке», – пăшăрханса выртрĕ Иван Семенович хваттер алăкĕ уçăлнине илтсен. Сехет çине пăхса илчĕ. Вуннă иртнĕ. Ывăлĕпе кинĕ ĕç нумайййипе сăлтавласа киле çывăрма вăхăт çитсен çеç таврăнаççĕ. Ирхине каллех ĕçе васкаççĕ. «Пĕтĕмпех эпĕ айăплă. Çапла вăл ватлăх тени. Ачасемшĕн те ытлашши иккен».

Иван Семенович хуларан 20 çухрăмра вырнаçнă ялта çуралса ӳснĕ. Хăйĕн мăшăрне те тăван тăрăхрах тупнă. Шел, виçĕ çул каялла арăмĕ чирлесе çĕре кĕчĕ. 70-тен иртнĕ арçын пахчара, садра тăрмашма юрататчĕ. Темĕн тĕрлĕ çимĕç ӳстеретчĕ вăл хăйĕн участокĕнче. Кĕркунне ывăлĕн çемйине кашни килмессерен пӳлĕмне вырнаçтарчĕç. Оля тĕп хулара вĕренет, килне сайра хутра çеç килет. Виçĕ уйăх вырăнпах выртрĕ Иван Семенович. Нихăçан та çын куçĕнчен пăхманскер, питĕ лайăхмарланчĕ. Ывăлĕпе кинĕ май килнĕ таран хавхалантарма тăрăшрĕç ăна. Кун пек ĕç каймасть тесе пĕчĕккĕн хул-çурăмне хускатма пуçларĕ вăл. Акă, туя çине тайăнса утма та пуçларĕ. Чĕрине вара пĕр шухăш канăç памарĕ. Иван Семенович хăйне çак килте ытлашши туйрĕ. Ывăлĕн хваттерĕ пĕчĕк, икĕ пӳлĕмлĕ çеç. Мăнукĕ канмалли кунсенче таврăнсан пушшех тăвăр. Тата юлашки вăхăтра çывăх çыннисем яланах кая юлса килме пуçларĕç. Ахăртнех, ватă çынна курас мар тесе çывăрма çеç килеççĕ вĕсем. Кунĕпе килте ларса ывăнсан подъезд умне тухать Иван Семенович. Кунта кӳршĕ хĕрарăмĕпе калаçса чунне уçать. Тăванĕсене чăрмантарас мар тесе ваттисен çуртне кайма шут тытрĕ вăл. Ывăлĕ малтанласа ашшĕ шӳтлет пуль терĕ. Ку шухăша пуçран кăларма ыйтрĕ. Анчах ашшĕ хăйĕннех каланине кура ал сулчĕ: «Юрать, вăхăт тупсан кайса калаçăп»,– тесе шантарчĕ. Кун хыççăн кун иртрĕ, анчах хăйĕн сăмахне пурнăçлаймарĕ вăл. Васкавлă ĕçĕсем тупăнсах пычĕç. Иван Семенович хыттăн каласан çеç ӳкĕте кĕчĕ ывăлĕ: «Савăн, канмалли кунсенче илсе кая п», – терĕ. Кинĕ тепĕр кунне çĕнĕ вырăн таврашĕ туяннине курчĕ. «Ман хыççăн çуса тасатса тепĕр хут усă курма йĕрĕнеççĕ вĕт, укçа шеллемесĕрех çĕннине туяннă», – шутларĕ ватă. Хăйне вара тунсăх тыткăнларĕ. Çĕнĕ çĕрте мĕнле хăнăхĕши? Кĕçех çуркунне çитет. Эппин, вăрă акмалли, пахчаçимĕç лартмалли вăхăт пуçланать. Мĕн тери аванччĕ тăван килĕнче! Çĕр участокне сутма каланăччĕ ывăлне. Сутнăши? Ăна кăна шарламарĕ.

Шăматкун ирех пур-çук ялалине пуçтарма пикенчĕ Иван Семенович. Ывăлĕпе кинĕ хăйсене ним пулман пекех тыткаларĕç. «Тинех ватă çынран хăтăлтăмăр тесе савăнаççĕ пуль-ха. Интереслĕ, ман пата ваттисен çуртне килсе кайĕçши уйăхра пĕр хутчен те пулсан? Темле пулсан та халиччен сив сăмах каласа курман ачисем ашшĕне. Хăй те вĕсене хăнăхрĕ ĕнтĕ, ак уйрăлма та ĕлкĕреймен – халех тунсăхлать». Йывăр шухăшсене путнă арçын машина хăй çуралнă яла вĕçтерсе çитнине те сиссе юлаймарĕ. Килĕ умне çитсе чарăнсан çеç тĕлĕннипе çухалса кайрĕ. «Ирт малалла, атте, ку çĕнĕ пӳрт санăн. Пĕтĕм ĕçе вĕçлеймерĕмĕр, паллах. Ху питĕ васкатан та. Пурăнма пулать. Ăшă пур, шыв кĕртнĕ. Ыттине пĕчĕккĕн тăвăпăр», – терĕ ывăлĕ. Иван Семеновичăн пичĕ тăрăх куççуль юхса анчĕ. Ывăлĕпе кинне ыталаса илчĕ, каçару ыйтрĕ. Мĕншĕн япăх шутланă-ха вĕсем пирки вăл? Çывăх çыннисем ĕç хыççăн яла çул тытнă иккен, пушă вăхăтра кунта вăй хунă. Ашшĕ вара вĕсем çине кӳренсе çӳренĕ. Малашне пачах урăха пулĕ. Çакна çирĕплетсех калама пултарать Иван Семенович.

Çĕнĕ авторсем – çĕнĕ сăвăсем

Шурă çĕмĕрт

Чӳречe умĕнче шурă çĕмĕрт
Илĕртет çуркунне çурăлсан.
Пурнăçра çуралать çутă ĕмĕт
Савнице каçсерен тĕл пулсан.
Тĕл пуласчĕ санпа, çут хĕвелĕм!
Ăшăтасчĕ ялан пĕр-пĕрне!
Маншăн вăл юратуллă телейĕм
Савăнса пурăнма ĕмĕрне!
Чӳречe умĕнче шурă çĕмĕрт,
Пит хитре-çке мерчен чечексем!
Çулĕсем те иртсен шурă çĕмĕрт
Туйăмпа парнелет-çке илем!
Пĕр-пĕрне ăшă сăмахсем калама
Ан вăтанăр! Хитрелĕх – виç кунлăх,
Илемлĕх – чунра ĕмĕрлĕхе!
Сывлăха упрăр,
мăнуксемпе киленĕр!

А.ИЛЛАРИОНОВ,
Чăрăшкас Хирлеп

Сăнӳкерчĕк

Ак каллех сан сăнӳкерчĕк
Манăн алăра.
Юратса эпĕ пăхатăп
Сан сăну çине.
Чĕрĕ пек эс туйăнатăн.
Кăшт пăхан кулса.
Çыпăçуллă сăн-пуçу,
Çамрăк çав кунта.
Çĕртĕнетĕп тутапа,
Ачашлап сăнна,
Куçунтан вара пăхса
Шăппăн çеç ыйтап:
«Ах, ăçта, ăçта-ши эс,
Савнă çыннăм ман?»
Ак халех, çак самантрах
Хуравлас пекех:
«Мăшăрăм, кунта-çке эп.
Ма мана шыран?
Эпĕ пăрахса кайман.
Эп çумра ялан».
Çук, илтĕнмест сан сассу,
Хускалмасть туту.
Чĕрĕлмест-çке сан сăну,
Тĕлĕк мар çав ку.

Любовь ЛУКИНА,
Уравăш

Мунча

Паян тулта ăшă чух,
Пур кил-йышăм килте чух
Пуçа усса ларам мар,
Хутса ярам мунчана.
Мунча кĕнин усси пур,
Вуттине эс хур та хур.
Шывĕ вĕреме кĕрсен
Хурăн милĕкне пĕçер.
Хам çине хĕрес хурса
Кĕтĕм хатĕр мунчана,
Атте-анне йăлипе
Ятран патăм ăшшине.
Çăт-çат, çăт та çат,
Кĕвĕ каласа эс çап:
«Çын сăмаххи чул çине
Йăлтăр-ялтăр хам çине, ух!»
Çăт-çат, çăт та çат,
Çурăм тăрăх çап та çап:
«Хурăн милĕк сиплĕрех,
Сывлăх пултăр çирĕпрех, ух!»
Çапăнсан тухрăм тула,
Пуç тăрăх ятăм шыва.
«Ман çинчи мĕнпур чир-чĕр
Çĕр тĕпне кĕрсе кайтăр!»
Çӳлти Турă хăвачĕпе,
Ковид чирĕ çын çинче
Ан та юлтăр тĕнчере.

Е.ПЕТРОВА

Пурăнатăн...

Шурăмпуç çутипе вăрансан,
Кайăксен юрри хăлхара янрасан,
Хаваспа ура çине тăрсан
Эсĕ ку тĕнчере пурăннине туян.
Ешĕл вăрмана кĕрсен,
Ансăр сукмакпа утсан,
Унти илеме курма пĕлсен
Эсĕ чăн та пурăнатăн.
Çутçанталăкпа килĕшме пĕлсен,
Чĕрӳ хаваспа çунсан,
Пурнăçу çирĕп урапа çинче шусан
Эсĕ пурăнатăн.
Хĕвел тӳпене çĕкленсен,
Тӳпене, хĕвеле, чечексене,

Кайăксене, çынсене:
«Ырă ир!» – тесе кăшкăрас килсен
Эсĕ пурăнатăн.

Нина ФАДЕЕВА,
Отиккăвă